27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
17
ЭРНЕКУН
226(6721) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Фашистла тискер кайăка персе вĕлерме тата Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартма хамăр Хĕрлĕ Çара пулăшар

Магнитогорскри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн тата Кузнецкри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн пĕтĕм работникĕсем Совет Союзĕн промышленноçĕпе транспортĕнче ĕçлекен мĕнпур работникĕсене, служащисене, инженерсене тата техниксене чĕнсе калани

Хаклă юлташсем!

Пирĕн аслă çулпуç тата гениллĕ полководец Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада пĕтĕм çĕршыв савăнса итлерĕ. Пирĕншĕн те праçник çитрĕ. Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршыв çĕрĕсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕ. [illegible]

Пирĕн халăхăн фронтра тата тылра тыран чаплă çĕнтерӳсем çĕршыв хăватне, Сталин юлташ совет тылĕ ĕçне хакларĕ.

Хальхи вăхăтра, Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăкăн шăтăкне хирĕç татăклă наступлени пуçласа яма тата тăшмана пĕтерсе тăкма хатĕрленнĕ вăхăтра, пĕтĕм совет халăхĕ Германие кĕске вăхăтра çĕмĕрсе тăкмашкăн хамăр Хĕрлĕ Çара пулăшмалла.

Хĕрлĕ Çарăн, союзниксен çарĕсемпе пĕрле, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнче вĕлермелле тата Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартмалла пулать. Çак ĕçе тумашкăн пирĕн тата ытларах вăй хурса ĕçлемелле, йывăрлăхсене çĕнтермелле, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтермешкĕн фронта мĕн кирлине пурне те памалла.

Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи хамăрăн тивĕçе ăнланса илсе, эпир, металлургсем, аслă Сталинăн докладĕпе тата приказĕпе хавхаланса, çакăн пек социализмлă обязательствăсем илетпĕр:

Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан комбинат:

1. 1944-мĕш çулхи плана срокчен тултарса декабрĕн 17-мĕшĕнче тултармалла. Çулталăк вĕçлениччен плантан ирттерсе 600 пин тонна кокс, 600 пин тонна чугун, 450 пин тонна хурçă, 340 пин тонна прокат памалла.
2. Планран ирттерсе 40 миллион тенкĕлĕх накопление тумалла.
3. Çар промышленноçĕн пур заказĕсене те пĕтĕмпех пурнăçламалла тата лайăх йышши металл памалла.

Кузнецкри Сталин ячĕпе тăракан комбинат:

1. Чугун шăратмалли çулталăкри плана декабрĕн 17-мĕшĕнче, хурçă шăратмалли плана декабрĕн 20-мĕшĕнче, прокат кăлармалли плана ноябрĕн 27-мĕшĕнче тултармалла.
2. Плана пăхнинчен ытларах перекетлесе, кăçал планран ирттерсе 60 миллион тенкĕрен кая мар накопление тумалла.
3. Ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 5 процент ирттерсе пурнăçламалла.
4. Çар промышленноçĕн мĕнпур заказĕсене вăхăтра пурнăçламалла тата лайăх йышши металл памалла.

Çак социализмлă обязательствăсене илсе, эпир Совет Союзĕн промышленноçĕпе транспортĕнче ĕçлекен мĕнпур работникĕсене, служащисене, инженерсене тата техниксене пирĕн пек тума чĕнетпĕр, çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн тата хĕлле кăтартуллăн ĕçлессишĕн Пĕтĕм Союзĕпе социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнетпĕр.

Çар промышленноçĕнче ĕçлекен работниксем — танксем, самолетсем, тупăсем, минометсем тăвакансем, боеприпассем тăвакан заводсен работникĕсем! Хĕрлĕ Çара хĕçпăшала боеприпас ытларах туса парар!

Шахтерсем, нефтяниксем, энергетиксем! Хура металлурги тата çар хуçалăхне кирлĕ ытларах кăмрăк, нефть, электричество энергийĕ тăвассине ӳстерсе пырăр!

Железнодорожниксем! Вăрçă хатĕрĕсене хăвăрт турттарса çӳрĕр, металлурги промышленноçне тата ытти отраслĕсене вĕçĕмсĕр топливо илсе çитерсе тăрăр!

Эпир промышленноçпа транспортăн мĕнпур отраслĕсенчи работникĕсене хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшмалли ĕçре пирĕнпе пĕрле ăмăртма чĕнетпĕр.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе — малалла, çĕнтерӳсем патне!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Çак çыруна Магнитогорскри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн тата Кузнецкри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пухăвĕсенче сӳтсе-явса йышăннă.

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕн 1944 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕпе 16-мĕшĕнчи ларăвĕсем çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Шупашкар хулинче, Советсен Çурчĕн лару залĕнче Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ уçăлчĕ.

Сессие Чăваш АССР Верховный Совечĕн Председатель заместителĕ В. М. НЕМЦЕВ депутат уçать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ, пĕр саслă пулса, çакăн пек кун йĕрки çирĕплетет:

1. Чăваш АССР бюджетне 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен.
2. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инваличĕсене пулăшас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен.
3. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕсене, VII-мĕшпе VIII-мĕш Сессисем хушшинче йышăннисене тата Чăваш АССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕскерсене, çирĕплетесси.

Сессин кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа — Чăваш АССР бюджетне 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен — Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ И. И. ЗОЛОТНИКОВ юлташ доклад туса парĕ.

Кун хыççăн Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш АССР Верховный Совечĕн Бюджет Комиссийĕн Председателĕ К. Д. МЕДЯНИН депутат тунă содоклада итлет.

Чăваш АССР бюджетне 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклад тăрăх прениссем Г. А. ХЕРСОНОВ депутат (Ишек суйлав округĕ) тата ĕçсынни депутачĕсен Чурачăк районĕнчи Совечĕн исполком председателĕ И. А. СКВОРЦОВ тухса калаçĕç.

Çакăнпа Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

* * *

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре, Советсен Çурчĕн лару залĕнче Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ уçăлчĕ.

Председатель пулса ертсе пыракан — Чăваш АССР Верховный Совечĕн Председатель заместителĕ В. М. НЕМЦЕВ депутат.

Чăваш АССР бюджетне 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклад тăрăх прениссем малалла пыраççĕ.

Пренире В. Т. ХАРИТОНОВ депутат (Шупашкар суйлав округĕ), ĕçсынни депутачĕсен Тăвай районĕнчи Совечĕн исполком председателĕ И. Н. ШИРОВ, Е. Д. ДМИТРИЕВА депутат (Албахтино суйлав округĕ), ĕçсынни депутачĕсен Муркаш районĕнчи Совечĕн исполком председателĕ Г. Ф. ФЕДОРОВ, Чăваш АССР Сутĕç Халăх Комиссарĕ М. П. МАКАРОВ, В. П. ЧЕРНОВ депутат (Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕ), Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ А. И. ЛИХАЧЕВ, А. С. РОДИОНОВ депутат (Кăшаркасси суйлав округĕ) тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. М. МАТВЕЕВ тухса калаçĕç.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн И. И. ЗОЛОТНИКОВ юлташăн юлашки сăмахне итлет.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ, малтан статьясем тăрăх, кайран пĕтĕмĕшпе илсе, Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин бюджетне 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче пурнăçа кĕртни çинчен калакан Закона пĕр саслă пулса çирĕплетет.

Кун хыççăн Сесси кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтăва пăхса тухма тытăнать.

Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инваличĕсене пулăшас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ А. И. КИРЕЕВ юлташ доклад туса парĕ.

Çакăнпа Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăнать.

Мускава Варшава хулин делегацийĕ килнĕ

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче Мускава Варшава хулин делегацийĕ килнĕ.

Делегацире çаксем пур: Варшава хулин президенчĕ М. Спыхальский тата Варшава хулин Халăх Совечĕн представителĕсем В. Цудны, В. Мальчинский, И. Ковальская.

Вокзалра делегацие Мускав Совечĕн Председателĕн Заместителĕ М. Яснов юлташ, Мускав хули коменданчĕн заместителĕ Н. Гребенщиков полковник, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Совет Союзĕнчи Представителĕн ĕçĕсене туса тăракан С. Ендрыховский господин тата ыттисем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

И. В. Сталин Варшава халăхĕн делегацине йышăнни

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Варшава хулин делегацине йышăннă. Делегацире çаксем пулнă: Варшава Президенчĕ М. Спыхальский тата Варшавăн Халăх Совечĕн представителĕсем В. Цудны, В. Мальчинский, И. Ковальская.

Делегаци Польша халăхне пулăшнăшăн Совет Правительствине тав тăвас шутпа И. В. Сталина Варшава халăхĕн пĕлтерӳллĕ парнине — Польшăн бронза гербне панă.

М. Спыхальский тата И. В. Сталин пĕрпĕрне сăмах каланă.

М. Спыхальский каланă сăмах

Гражданин Маршал!

Пирĕн аслă союзник пулса тăракан Совет Союзĕн наци праçникĕ кунĕнче — Вырăссен Аслă революцийĕ 27 çул тултарнă кун — Польша столици пулса тăракан Варшавăн Халăх Совечĕ, Варшавăри политикăллă организацисем, профсоюзсем, духовенство тата общество организацийĕсем хăйсене ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çара тата унăн аслă çулпуçне Сталин Маршала чунтан-чĕререн тав тума йышăнчĕç.

Сире, гражданин Маршал, пĕлтерӳллĕ парне — государство гербне пама йышăнчĕç. Çак герба Прагăри-Варшавăри рабочисем оккупаци хаяр вăхăтĕнче тăрăшса сыхласа хăварнă.

Çак постановление Варшава халăхĕ йышлă çынлă митингсенче çав тери хавасланса ырларĕ. Çакă вăл Польша Халăх Совечĕн тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн политикине — хамăрăн хăватлă славян кӳршĕпе союзлă та туслă пурăнас политикине — Пĕтĕм Варшава ырланине пĕлтерет.

Поляксемшĕн Варшава — Польша халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç нĕр чарăнмасăр кĕрешнине кăтартакан паллă пулса тăрать. Варшава вăл нихăçан та кĕрешме чарăнман. Варшава халăхĕ яланах хăйне хĕвелтухăç енчен килсе ирĕке кăларассине кĕтсе тăнă, вăл хăйĕн кĕрешĕвне Совет Союзĕнчи халăхсен паттăр кĕрешĕвĕпе çыхăнтарса пынă.

Варшавăна-Прагăна Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕ пĕрле ирĕке кăларчĕç, ку çеç те мар, ирĕке кăларнă хыççăнах ăна тăванла Совет Союзĕ пысăк пулăшу пачĕ.

Поляксен ваттисем каланă сăмахĕ çакăн пекки пур: «Çын чăнах та тус иккенне инкекре пĕлеççĕ», теççĕ. Эпир, гражданин Маршал, Сирĕн чăн туслăха Эсир пире кĕрешӳре пулăшнинчен тата оккупаци вăхăтĕнче выçăхса пурăннă Варшава халăхне пулăшнинчен куртăмăр.

Эпир çакна çирĕп шанса тăратпăр: Варшавăна тата пĕтĕм Польшăна татăклăнах ирĕке кăларассишĕн пыракан çапăçура эпир çĕнтерӳ патне пĕр-пĕринпе тăванла союзлă пулса пырăпăр. Эпир пĕлетпĕр: эпир хамăр çĕршыва хĕвелтухăçĕнчи аслă кӳршĕ туслăн пулăшнипе хӳтĕлесе тăрăпăр.

Пĕрле кĕрешсе, гитлерла Германие пĕтерсе тăкар, Совет Союзĕпе туслă пурăнма тăрăшакан демократиллĕ Польшăна тата хамăрăн питĕ хитре Варшава хулине туса çитерер, вăл вара ĕлĕкхинчен те хитререх пулса тăрĕ».

И. В. Сталин каланă сăмах

Сталин юлташ М. Спыхальский господина ответлесе çапла каланă:

«Хисеплĕ Спыхальский господин!

Хисеплĕ делегатсем!

Эпĕ Польша столицин—Варшавăн çак парнине Сирĕн аллăртан Сире тав туса йышăнатăп; эпĕ ăна Польша халăхĕ Совет Союзĕнчи халăхсене тăванла кăмăлланине кăтартакан тата пирĕн пĕрлехи тăшмана— гитлерла Германие хирĕç пыракан Польшăпа Совет Союзĕ хушшинче тунă çирĕп боевой союза пĕлтерекен паллă вырăнне хурса йышăнатăп».

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов пулнă.

(ТАСС).

Мускав Советне Варшава хулин парнине пани

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Варшава хулин делегацийĕ Мускав Совечĕн Председательне В. П. Пронин юлташа Варшава хули Совет Союзĕн столицине панă парнене — Польшăн бронза гербне панă, ăна совет халăхĕ тата унăн Хĕрлĕ Çарĕ Польша халăхĕпе Варшава халăхне пулăшнăшăн тав туние палăртас шутпа панă.

Парне панă чухне делегацин членĕсем пулнă: Варшава Президенчĕ М. Спыхальский тата Варшавăн Халăх Совечĕн представителĕсем В. Цудны, И. Ковальская, В. Мальчинский. Бронза герба панă чухне Мускав Совечĕн Исполкомĕн çак членĕсем пулнă: П. В. Майоров, А. В. Астафьев П. В. Абрамов, М. В. Сарычева, М. Д. Паленых, Т. А. Селиванов, генерал-майор М. Ф. Королев, Мускав хулин главнăй архитекторĕ Д. Н. Чечулин.

М. Спыхальский тата В. Пронин пĕрпĕрне сăмах каланă, çавăн хыççăн пĕрпĕрине туслăн калаçнă. (ТАСС).

Çитес çуракине хатĕрленеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Именево ялсоветĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ докладне тулли хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Аслă çулпуçăн историллĕ докладĕ çине ответлесе, вĕсем фронта тата ытларах пулăшассишĕн ырми-канми ĕçлеме пулчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче пур ĕçре те кая юлса пынă пулсан, кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государство умĕнчи пур парăмсене те вăхăтра парса татрĕ. Халĕ колховниксем çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Вăрлăх фончĕсене хывса çитернĕ. Халь ялхуçалăх машинисене юсас, вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçсене пуçăнаççĕ.

«Малалла» колхоз членĕсем Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçарса ячĕç. Çитес çураки валли мĕнпур культурăсен вăрлăхĕсене хывса çитернĕ. Вăрлăхлăх клевера çапса пĕтернĕ, 25 пăт таса клевер вăрлăхĕ хатĕрленĕ.

Колхоз государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнă. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 1.200 пăт тырă, 1.500 пăт çĕрулми хывнă.

Г. МЕФОДЬЕВ.

ТЫТСА ИЛНĔ ХĔÇПĂШАЛСЕН ВЫСТАВКИ

Минск хулинче тăшмантан тытса илнĕ хĕçпăшалсен выставки уçăлнă. Выставкăра темиçе пин тĕрлĕ хĕçпăшал пур. Бобруйск патĕнчен (унта гитлеровецсен дивизийĕсене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнă) «тигрсем», «пантерсем», «фердинандсем» илсе пынă, вĕсене совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем персе сĕмĕрнĕ. Минск хулинчен çурçĕртерехре çапăçусем пынă районсенчен тĕрлĕ калибрлă темиçе вунă тупă илсе пынă. Тăшман аэродромĕсенче тытса илнĕ самолетсем те пур. Кунсăр пуçне, унта минометсем, шыв урлă каçмалли хатĕрсем инженери тата интендант оборудованийĕ лухса тăратнă.

Выставка территорийĕнче нимĕçсем Минск хулине хӳтĕлеме тунă дот хăйĕн мĕнпур оборудованийĕпех сыхланса юлнă. Ăна та кăтартаççĕ.

Выставкăна темиçе пин çын пырса курнă ĕнтĕ. (ТАСС).

ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕМ ТĂВАКАН ЗАВОДСЕНЕ ЮСАСА ХУТА ЯРАÇÇĔ

Ирĕке кăларнă районсенче ялхуçалăх машинисем тăвакан заводсене юсаса хута ярас тĕлĕшпе вăйлă ĕç пырать. Украинăри предприятисем — Запорожьери «Коммунар», Кировоградри «Красная звезда», Одессăри Октябрьти революци ячĕпе тăракан завод тата ыттисем те çĕнĕрен ура çине тăраççĕ. Ростоври тата Гомельти гигантсене — Ростсельмаша тата Гомсельмаша юсаса çитереççĕ. (ТАСС).

Чăваш АССР бюджетне 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ Золотников юлташ тунă докладран

Депутат юлташсем!

Чăваш АССР Верховный Совечĕн саккăрмĕш Сессийĕ совет халăхĕ савăнăçлă та чаплă вăхăт пурăнса ирттернĕ кунсенче пухăнчĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулта тунă чаплă çĕнтерӳсен итогне туса, çапла каларĕ: «Юлашкинчен иртнĕ çулталӑк нимĕç çарĕсене Совет Союзĕн çĕрĕ çинчен, Франци, Бельги, вăтам Итали çĕрĕсем çинчен хăваласа кăларнипе тата вăрçă ĕçĕсене Германи территорийĕ çине куçарнипе вĕçленчĕ».

«Хĕрлĕ Çар тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултарчĕ пулсан тата нимĕçсене Совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларчĕ пулсан, — тет Сталин юлташ, — çакна вăл пирĕн пĕтĕм çĕршыв, пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем тылран пĕтĕм вăя хурса пулăшса тăнипе турĕ. Мĕнпур совет çыннисен—рабочисен, хресченсен, интеллигенцин вăя хĕрхенмесĕр туса пынă ĕçĕ, çавăн пекех тата пирĕн государствăпа парти органĕсен ертсе пырас ĕçĕ те иртнĕ çулталăкра «Йăлтах фронт валли» текен ялав айĕнче пулса пычĕ».

Пирĕн ĕçе çавăн пек пысăка хурса хакланин совет халăхне çапăçура тата ĕçре çĕнĕ паттăр ĕçсем тума. Отечественнăй вăрçă каларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртмешкĕн хамăрăн вăя татах та ытларах мобилизацилеме хавасланатарать. Чăваш халăхĕ Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмра юлмарĕ. Промышленность, ялхуçалăхĕ тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсем енĕпе хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене вăл начар мар пурнăçа кĕртрĕ.

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозавод коллективĕ чĕннипе Октябрь уявĕ умĕн сарăлса кайнă социализмлă ăмăрту пирĕн республикăри предприятисен, артельсен, колхозсемпе совхозсен производствăллă программине татах та лайăхрах пурнăçа кĕртме пулăшрĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă укçа-тенкĕ те сахал мар пама ыйтрĕ. Çавăнпа та пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче тĕрлĕ пурлăхсемпе укçа-тенке май пур таранах перекетлес ĕçе пурнăçа кĕртни кирлĕ пулчĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, çĕршывăн вăрçă тĕлĕшĕнчи расхочĕсем валли государство бюджетне тата вырăнсенчи бюджета ытларах укçа парас тесе, пысăк тухăçлăхпа ĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешмелле пулчĕ.

логĕпе ялхуçалăх налогĕ енĕпе.

Калас пулать, малта пыракан хăшпĕр халăх комиссариачĕсемпе хуçалăх органĕсем те бюджета тӳлемелли плансене хăйсен тĕп программине ирттерсе тултарнипе мар, тупăшлăрах япаласем ытларах туса кăларнипе çеç пурнăçа кĕртнĕ. Çапла, Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕн Шупашкарти сăра тата сиропа морс хатĕрлекен предприятийĕсем, çавăн пекех тата макарон фабрики хăйсен планран ытлашши усламне тĕп продукци туса кăлармалли плана тултарнипе мар, планра кăтартман продукци (сироп тата морс) сутнипе илнĕ. Апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсем продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн начар кĕрешеççĕ.

Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕн, ĕç тухăçлăхне хăпартса, производствăпа çыхăнман расходсене тата тĕрлĕ çухатусене чакарса, хăйĕн тĕп продукци планне çĕр процентчĕпех пурнăçламалла тата продукцин хăйне ларакан хакне чакармалла.

Топливо промышленноçĕн управленийĕ бюджета панă тупăш пуринчен ытла 1943 çулта илнĕ услама урăхла шутланипе пулнă. Кăçалхи усламран бюджета 1.400 пин тенкĕ çеç кĕнĕ. Çакă вăл нумай леспромхозсем вутă хатĕрлесе турттармалли плана тултарманнинчен килет. Вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана тăхăр уйăх хушшинче 43 процент çеç тултарнă.

Верховный Совет Сессийĕ Топливо промышленноçĕн управленине тата леспромхозсен директорĕсене хăйсен ĕçне нумай лайăхлатма тата 1944 çулхи плана пур енĕпе те тултарма хушмалла, вĕсене бюджета памаллине пĕтĕмĕшпех тӳлеттермелле.

Вăрман Промышленность Комиссариачĕн предприятийĕсем иртнĕ тăхăр уйăх хушшинче бюджета тупăш памалли плана 43,2 процент чухлĕ çеç тултарнă. Вĕсем бюджета амортизаци укçинчен 80.000 тенкĕ тата усламсенчен уйăрса памалли тупăша 500 пин тенкĕ ытла памасăр хăварнă.

Вăрман Промышленность Комиссариачĕн руководителĕсем тата унăн предприятийĕсен директорĕсем продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ. Çакна пула вĕсем сакăр уйăх хушшинче продукцин хăйне ларакан хакне тата планра кăтартман тăкаксене 2 миллион тенке яхăн ӳстерсе янă.

Çак çитменлĕхсене иртнĕ сессисенче те кăтартса панăччĕ, анчах та Вăрман Промышленность Комиссариачĕн руководителĕсем финанс хуçалăхне йĕркене кĕртме тăрăшман. VIII-мĕш Сесси çак тĕлĕшпе ун умне пысăк требованисем лартмалла тата ăна хăйĕн программине тултарманшăн та, бюджет умĕнчи обязательствăсене пурнăçламаншăн та ответ тыттарма пултарать.

Стройматериал промышленноçĕн управленийĕ производство программине пурнăçа кĕртсе пымасть. Тăхăр уйăх хушшинче плана палăртнинчен 2.134 пин кирпĕч сахалтарах тунă. Шупашкарти кирпĕч заводĕ, кирпĕчĕн хăйне ларакан хакне ӳс-

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Чăваш АССР бюджетне 1944 çулхи тăхăр уйăх хушшинче пурнăçа кĕртни

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ пирĕн республикăн бюджетне тупăшсем енĕпе те тата расходсем енĕпе те 163.468,3 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетрĕ. Çакă вăл 1943 çулхи бюджетран 23 миллион тенкĕ ытларах пулать. Анчах та Чăваш Республикин 1944 çулхи бюджетне районсенчи тата хуласенчи советсен сессийĕсем хăшпĕр улшăнусем кĕртрĕç. Çав улшăнусене кĕртнĕ хыççăн, тупăшсем енĕпе бюджет 163.572,9 пин тенкĕ чухлĕ е Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ çирĕплетнинчен 104,6 пин тенкĕ чухлĕ нумайрах пулчĕ; расходсем енĕпе бюджет 62,1 пин тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ, вара бюджетăн пĕтĕм расхочĕсем 163.530,5 пин тенкĕ чухлĕ пулчĕç.

Бюджетра пулнă перекетлĕхпе усă курса, ятарласа укçа тенкĕ хушса памасăрах, чылай çĕнĕ расходсем тунă. Сăмахран: икĕ çĕнĕ районри аппарата тытса тăма 707 пин тенкĕ, çав районсем валли çуртйĕр куçарма 500 пин тенкĕ, ачасен сывлăхне сыхлас ĕçсене тума 350 пин тенкĕ, пиравăс фабрикинче капитальнăй ĕçсем тума 60 пин тенкĕ искусство учрежденийĕсене юсаса ĕçе яма 500 пин тенкĕ, шкул çурчĕсене юсама 630 пин тенкĕ, ачасен приемникĕсене пысăклатма 190 пин тенкĕ, Улатăр хулине юсама 300 пин тенкĕ панă тата ытти те.

Кунсăр пуçне, Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, бюджетри перекет шучĕпе 658,5 пин тенкĕлĕх васкавлă расходсем тунă. РСФСР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Вăрман промышленность Халăх Комиссариатне памалли укçа-тенкĕ хисепне 4.045 пин тенкĕ чухлĕ ӳстернĕ. Çапла вара расходсем пĕтĕмпе 8237,8 пин тенкĕ чухлĕ ӳснĕ. Çак расходсене витме РСФСР Совнаркомĕ пирĕн бюджета 3.100 пин тенкĕ çеç панă.

Иртнĕ тăхăр уйăх хушшинче бюджета пурнăçа кĕртессине мĕнле организацилени-ха?

Тупăшсем енĕпе бюджета пĕтĕмпе 114.793,8 пин тенкĕ чухлĕ пурнăçланă, ку вăл 70,2 процент пулать. Расходсем енĕпе бюджета тăхăр уйăх хушшинче 106.651 пин тенкĕ чухлĕ пурнăçланă, ку вăл 65,2 процент пулать.

Тăхăр уйăхри даннăйсем ак çак предприятисемпе хуçалăх органĕсенчен бюджет валли тупăш çителĕклĕ килсе тăни çинчен калаççĕ: Наркомзем предприятийĕсенчен— 95,4 процент, Наркомторг предприятийĕсенчен — 87,4 процент, Наркомпищепром предприятийĕсенчен — 135 процент, пулă трестĕн предприятийĕсенчен — 75,8 процент, сăмăл промышленноçран — 199 процент, районри промышленноçран — 81,4 процент, оборотран илекен налог — 75,5 процент, государство заемĕсен укçинчен уйăрса панисем—80,1 процент, кооперацирен тупăш тăрăх илекен налог—77,4 процент.

Иртнĕ тăхăр уйăх хушшинче бюджета çаксенчен тупăш сахал кĕнĕ: вырăнти топливо промышленноçĕнчен, аш-какайпа çет промышленноçĕнчен, Вăрман Халăх Комиссариатĕнчен, çуртйĕрпе коммунальнăй хуçалăхран, автотранспортран тата вăрçă на-

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ Золотников юлташ доклачĕн вĕçĕ

терниле. 95.000 тенкĕ çухатнă. Вăл 1943 çулта топливо планра кăтартнинчен 92 тонна ытларах, кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче 24.6 тонна ытларах çунтарнă. Стройматериал промышленность управленийĕн предприятийĕсем, договорсене пурнăçа кĕртмен пирки, штрафсемпе пенисем 11.4 пин тенкĕ тӳленĕ. Çакăн пирки вара стройматериалсем тăвакан предприятисен оборот укçи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 180 пин тенкĕ çитмест.

Промысла кооперацийĕн тăватă тĕп союзĕ тăхăр уйăх хушшинчи производство программине 82.1 процент чухлĕ пурнăçланă, çав шутра пурне те кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 92.8 процент тултарнă. Продукцие планра кăтартнинчен 7 миллион тенкĕлĕх ытла сахалтарах туса кăларнă.

Накоплени планне тăхăр уйăх хушшинче 66.0 процент чухлĕ çеç пурнăçланă.

Хуларн тата ялти халăха пите кирлĕ таварсем сутма промысла кооперацийĕ сутӳ-илӳ тăвакан организацисене тавар çителĕклĕ таранах туса пама пултарнă пулĕччĕ. Анчах та нумай артельсем пите начар тавар туса кăлараççĕ, çавăнпа та çав тавар темиçе миллион тенкĕлĕх сутăнмасăр выртать.

Артельсен тата çак çитменлĕхне кăтартса хăвармалла: вĕсем учетпа отчетность ĕçне начар туса пыраççĕ. Хăшпĕр артельсем отчетсемпе балансене тăратăчен çултăлăк та иртет. Учетпа отчетноçа начар туса пынă пирки таварсене вăрлавçисем пулаççĕ.

Промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн системинчи çак çитменлĕхсене пĕтерсе хартни çав союзсен ĕçне лайăхлатма пулăшĕ. Çак тĕлĕшпе вĕсене финансра банк работникĕсем пулăшмалла.

Промысла кооперацийĕ хăйĕн çулталăкри планне пур енĕпе те тултарма, çапла вара бюджета памалли тупăшсене пĕтĕмпех пама пултарать те, памалла та.

Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче пурнăçа кĕртни

Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана, налогсемпе страховка укçине, заем укçине тата тĕрлĕ вкладсене кĕртсе шутласан, пĕрремĕш кварталта 97.6 процент, иккĕмĕш кварталта 96.9 процент тата виççĕмĕш кварталта 72 процент тултарнă.

Халăхран укçа пухмалли плана тăтăшах пурнăçа кĕртсе пыман пирки, налогсем енĕпе 18 миллион тенкĕ тата ытти тӳлевсем енĕпе 9 миллион тенкĕ укçа пухса çитереймен.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарса пырайманнине мĕнле ăнлантарса пама пулать-ха? Пĕрремĕшĕнчен, ĕççынни депутачĕсен районсенчи совечĕсем вырăнсенчи финорогансемпе налог агенчĕсен ĕçне пачах та тĕрĕслесе тăмаççĕ тата, иккĕмĕшĕнчен, районсенчи финанс пайĕсем, уйрăмăнах инспекторсемпе налог агенчĕсем, укçа-тенкĕ пухас ĕçе сӳрĕклетрĕç.

Укçа-тенкĕ пухса çитерейменни учительсене, врачсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тата ытти работниксене ĕçукçи парас ĕçре пысăк чăрмавсем кӳчĕ.

Виççĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас енĕпе Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Вăрнар, Калинино, Комсомольски, Çĕмĕрле районĕсем пите начар ĕçлерĕç. Пĕр Октябрьски район кăна плана 151.4 процент тултарчĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕ 97.1 процент, Куславкка районĕ 92.9 процент тултарчĕç.

Ĕçе хăвăрт тата татăклăнах лайăхлатас тесен, тăваттăмĕш кварталти финанс планне тата бюджетăн тупăшсен планне пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртес тесен, республикăри мĕнпур финанс работникĕсен вăйне пур тӳлевсем енĕпе те укçа-тенкĕ пухса çитерес задачăна пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле, вĕсене государствăна служба дисциплинине пăхăнма хушмалла, финанс органĕсен аппаратĕнчи йĕркесĕрлĕхе йăлтах пĕтермелле.

Райсоветсемпе ялсовет председателĕсем финанс ĕçне хакламасăр тăнине пĕтермелле, финорогансен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрассине йĕркелемелле тата вĕсене ĕçре пулăшу парса пымалла.

Государство тупăшĕсен планне пурнăçа кĕртни

Государство тупăшĕсен тăхăр уйăхри планне республика 100 проценчĕпех тултарчĕ. Тăваттăмĕш квартал планне ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне (пĕр уйăх хушшинче) 41.7 процент тултарнă.

Государство тупăшĕсем енĕпе тăхăр уйăхри задание ăнăçлăн тултарни пире оборот налогне тӳлекен хуçалăх органĕсемпе базăсем пурте лайăх ĕçлеççĕ тесе калама право памасть-ха.

Сăмахран, оборотран илекен налог планне çу промышленность тресчĕ 71.2 процент, аш-какай комбиначĕ 55 процент, нефтеснаб 68.5 процент кăна тултарнă.

Оборотран илекен налог енĕпе бюджет умĕнчи хăйсен обязательствине Заготзерно, эрех завочĕ, Росглаввино пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕç.

Хуçалăх органĕсен хăшпĕр руководителĕсем тирпейсĕр пулнă пирки, оборот налогне тӳлесе çитерменнин хисепĕ чаçча сах пĕр миллион тенкĕ çитет.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемĕ

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕçе 1944 çулта республикăра калама çук кĕске срокра туса иртерне.

Иртнĕ çулта Чăваш республикинчи ĕççыннисем малтанхи кун заема 94.506 пин тенкĕлĕх çыранса укçине 46 миллион тенкĕ тӳлерĕç пулсан, кăçал вара малтанхи кунах заема 129 миллион тенкĕлĕх çырăнса укçине 61 миллион тенкĕ е заем сарнă хисепрен 47 процент чухлĕ тӳленĕ.

Çапла вара, заем сарма тытăнсан иккĕмĕш кунĕнче бюджетпа палăртнă 173 миллион тенкĕрен чылай иртерсе сарнă.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕçре Красноармейски, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Октябрьски, Çĕрпӳ, Муркаш районĕсем малта пычĕç, вĕсем заем укçине çийĕнчех тата пĕтĕмпех пухса çитерчĕç.

Ялсенче сарнă заем укçине пухас тĕлĕшпе Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Первомайски, Шăмăршă, Комсомольски, Элĕк районĕсем юлса пыраççĕ.

Çак районсем юлса пынин сăлтавĕ акă мĕнре: районсенчи перекет кассисен тата финанс пайĕсен работникĕсем заем укçине пухас тĕлĕшпе ĕçлеме пăрахрĕç. Финанс Халăх Комиссариачĕпе перекет кассисен Управленийĕ вара, çавăн пекех тата вырăнти советсем перекет кассисемпе финанс пайĕсен ĕçне начар тĕрĕслесе тăраççĕ.

1944 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне укçапа ямаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене республикăра 43.954 пин тенкĕлĕх сарнă, бюджетпа 42.100 пин тенкĕлĕх сарма палăртнă. Лотерея билечĕсене сармалли задание 23 район тата Шупашкар, Канаш, Улатăр хулисем ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç.

Лотерея билечĕсен укçине пухас ĕçе Шăмăршă, Элĕк, Вăрнар, Советски, Комсомольски тата Улатăр районĕсем начар организацилерĕç. Октябрьски, Чурачăк, Шупашкар, Тăвай, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Çĕрпӳ районĕсем колхозниксем хушшинче сарнă билетшăн укçине пĕтĕмĕшпех пухса çитерчĕç.

Вкладсем енĕпе

Перекет кассисене тĕрлĕ вкладсем явăçтарасси пирĕн ĕçри чи кая юлса пыракан участок пулса тăрать.

Перекет кассисен нумай работникĕсем хăйсен конторисенче ниçта тухмасăр лараççĕ, вĕсем патне укçа-тенкĕ илсе пырасса кĕтеççĕ. Перекет кассисен лайăх ĕçлекен работникĕсен опытне сармаççĕ.

Куславкка районĕнчи перекет касси вкладсем явăçтармалли плана кварталтан кварталах иртерсе тултарса пырать. Вăл ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вкладсем явăçтармалли задание 222 процент тултарнă. Çак районра перекет кассисем актив çине таянса ĕçлеççĕ, вăл пулăшнипе халăх хушшинче каласусем туса иртереççĕ. Анчах юлса пыракансем малта пыракансен опытне начар йышăнса илеççĕ, çавăнпа перекет кассисем нумайĕшĕ çак ĕçе организацилеме пĕлмеççĕ.

Государство страхованийĕ

Обязательнăй страховани планне виççĕ кварталта республика пĕтĕмпе 74.4 процент, харпăрхăй ирĕкĕпе страховани тунăшăн укçа пухмалли плана 44.5 процент тултарнă. Çĕрпӳ, Улатăр районĕсем тата Шупашкар хули обязательнăй страховани енĕпе те, харпăрхăй ирĕкĕ тăрăх страховани тунăшăн укçа пухас енĕпе те плана кашни кварталтах ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Первомайски, Советски, Комсомольски, Тăвай тата Çĕмĕрле районĕсем плана нихăш енĕпе те тата нихăш кварталта та тултарман. Ку районсенчи финанс пайĕсемпе страховой инспекцисен çак питех те паха ĕçе халех вăйлатас пулать.

Государство страхованийĕ социализмлă пурлăха тата колхоз пурлăхне, государство учрежденийĕсемпе вĕсен пурлăхне тата граждансен пурлăхне сыхлас ĕçре, çавăн пекех рабочисемпе колхозниксен тата интеллигентсен хăйсен пурнăçне сыхлас ĕçре те калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçе районсенче халех лайăхлатса ямалла. Чăваш республикинчи Госстрах управленийĕн районсенчи страховой инспекцисен тата хăйĕн аппаратĕнче ĕçлеме халех пултарулла çынсем тупса çитермелле.

Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕн расход пайне тăхăр уйăх хушшинче пурнăçа кĕртни

Тăхăр уйăх хушшинче пĕтĕмпе бюджетран 106.651 пин тенкĕ укçа панă, çакă вăл планпа палăртнин 65.2 проценчĕ пулать.

Расход енĕпе бюджета çакăн чухлĕ пурнăçа кĕртнине çителĕксĕр тесе шутламалла, ăна çакăнпа ăнлантарса пама пулать: иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, кăçал нумай районсемпе хуласен бюджечĕсем тата хăшнĕр таран республика бюджечĕ те, тупăшсен планне начар пурнăçа кĕртнĕ пирки, уйрăмăнах виççĕмĕш кварталта, бюджетпа сыхăннă учрежденисене кирлĕ чухлех укçа параймарĕç. Тепĕр енчен, районсенчи финанс пайĕсем, исполкомсем тата çутĕç пайĕсем, сывлăха сыхлав пайĕсем, коммунальнăй хуçалăх пайĕсем хăйсем те, укçа пур пулсан та, бюджетпа тата халăх хуçалăх планĕпе палăртса хунă ĕçсене пурнăçа кĕртес тесе çителĕклĕ мерăсем йышăнман. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне бюджетпа сыхăннă учрежденисен счечĕсем çинче 3 миллион тенкĕ яхăн укçа усă курмасăр тăрса юлнă.

Панă укçа-тенкĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ районсенчи учрежденисем енĕпе тата Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссариачĕ хуласене юсас тата пурăнмалли çуртйĕр тăвас енĕпе начар усă курнă.

Шкулсене тăхăр уйăх хушшинче 42.105.4 пин тенкĕ е 64.8 процент чухлĕ укçа панă, хуласенчи тата рабочи поселоксенчи ача сачĕсене тытса усрама 82.1 процент чухлĕ укçа-тенкĕ панă.

Культура çурчĕсем, вулав çурчĕсем тата библиотекăсем валли укçа-тенкĕ сахал панă. Сывлăха сыхлав учрежденийĕсене те çителĕклĕ панă теме çук. Анчах çав укçасемпе те начар усă кураççĕ.

Вырăнсенче учительсене тата ялти медицина работникĕсене ĕçукçи вăхăтра паманнисем пулнă. Рабочисемпе служащисене ĕçукçи парас енĕпе уйрăмах виççĕмĕш кварталта пысăк парăм пулнă. Вăл 2 миллион тенкĕрен те иртсе кайнă. Ĕçукçи тĕлĕшĕнчи парăма ноябрь уйăхĕнче кăна районсене çавна валли ятарласа 2 миллион тенкĕ ытла ссуда парса, пĕтерме май килчĕ.

Çавăн пек ссуда уйрăмах Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Чурачăк, Первомайски, Вăрнар, Комсомольски, Çĕмĕрле, Калинино, Пăрачкав, Канаш, Чкаловски тата ытти районсем нумай илчĕ. Тупăшсен планне тултарнă пулсан, çак районсем хăйсен тупăшĕпех рабочисемпе служащисене пурне те ĕçукçи вăхăтра пама пултарнă, çапла тумалла пулнă та.

Контрольпе ревизи ĕçĕ

1944 çулхи тăхăр уйăх хушшинче контрольпе ревизи аппаратĕ 417 учреждение, предприятие тата организацисенче ревизи туса иртерне. Çав ревизисем вăхăтĕнче çакна палăртнă: бюджет умĕнчи обязательствăна тултарманнисем 126.8 пин тенкĕлĕх пулнă, администрацие управленин расхочĕсем енĕпе 267.1 пин тенкĕ ытлашши расходланă, тупăшсем планпа палăртнинчен 1.537.8 пин тенкĕлĕх ытларах кулни палăрнă, хуçалăх органĕсене ревизи тунă чухне финанс дисциплинине пăсса 815.6 пин тенкĕ чухлĕ укçа тăкаклани палăрнă.

Финанс ĕçĕ çине çăмăллăн пăхни, харпăрхăйĕн финанс хуçалăхĕпе интересленменни тата тупăшсен планне тултарманни кăçал çакăн пирки пулнă: иртнĕ икĕ çул хушшинче халăхран укçа-тенкĕ пухас ĕç чылай çăмăллăн пурнăçа кĕрсе пычĕ тата бюджетран укçа-тенкĕ панă чухне ытла пысăк йывăрлăхсемех пулмарĕç. Çавна пула вырăнсенчи ертсе пыракан работниксем тата финанс работникĕсем нумайĕшĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçе хакламасăр тăма тытăнчĕç, çавăн пирки финанс тĕлĕшпе, уйрăмăнах виççĕмĕш кварталта, пысăк йывăрлăхсем пулчĕç.

Халĕ финанс ĕçне хакламасăр тăнине пĕтерес пулать, вырăнсенчи совет работникĕсен тата финорогансен хăйсен пĕтĕм вăйне ялсемпе районсен тата хуласен бюджетне, республикăн бюджетне тупăшсен планĕ енĕпе пĕтĕмĕшпех пурнăçлама мобилизацилес пулать. Çакă вара бюджетпа палăртнă пур ĕçсем валли те укçа-тенкĕ пĕр чăрмавсăр парса тăма май парĕ.

Наркоматсемпе управленисен руководителĕсем, предприятисемпе хуçалăх органĕсен директорĕсем бюджет умĕнчи хăйсен обязательствине пĕр сăмахсăр пурнăçласшăн кĕрешме тивĕçлĕ.

Халăх хуçалăхĕн интересĕсем, уйрăмах Отечественнăй вăрçă кунĕсенче, хозрасчета малалла тĕреклетсе пыма, хуçасăрлăха хирĕç татăклăн кĕрешме, тухăçлăн ĕçлессине ӳстерме тата совет тенкин хакне малалла çирĕплетсе пыма хушаççĕ.

* * *

Пирĕн Хĕрлĕ Çар хăйĕн юлашки задачине татса парас вăхăт умĕнче тăрать. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, совет çыннисен пĕтĕм вăй хурçа фронта пулăшмалла. Иккĕленмелли çук, Чăваш республикинчи ĕççыннисем, çулпуç доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, Сталин юлташ чĕнсе калани çине ответлесе, çĕнĕ паттăр ĕçсем тăвĕç тата фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çĕнтерес ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйне парĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире, тăшманпа çапăçса, НАДЬКАТА хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ХЕВЕШВЕЗЕКЕНЬ, ПУСТА ЧАС, СЕНТМАРТОНКАТА, ТАПИОШАГ, УРИ, ПЕТЕРИ ятлă пысăк ялсем тата НАДЬХАЛОМ, СЕНТМАРТОНКАТА ятлă чугун çул станцийĕсем. БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманăн ДУНАЙ шывĕн Хĕвелтухăç хĕрринчи плацдармне пĕтерсе тăкнă, ШОЛЬТ хулипе чугун çул станцине тата ДУНАЭДЬХАЗА ялне туртса илнĕ.

Ноябрĕн 10-мĕшĕпе 13-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем Венгрире нимĕçсемпе венгерсен 3.600 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапла вара, ноябрĕн 8-мĕшĕпе 13-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче Венгри çĕрĕнче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 7.700 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 18 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 21 самолетне персе ӳкернĕ.

НОЯБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире ЯСБЕРЕНЬ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — СЕДЕРКЕНЬ, КЕРЕМ, ЭМЕД, ХАРШАНИ, ВАТА, АБРАНЬ, ДОРМАНД, АТАНЬ, ЕРБЕТЕЛЕК, ХЕВЕШ, БОЦОНАД, ТАРНАЕШ, ЯСДОЖА, ЯКОХАЛМА, ЯС-ДЬЕРДИ, ТО-АЛМАШ, ТАПИОСЕЧЕ, КОКА, ТАПИОШУЛИ, ТАПИОШАП, МЕНДЕ ятлă пысăк ялсем тата ЭМЕД, ХЕВЕШ, БАЖОМАЙОР, ЕРБЕТЕЛЕК, ЯСДОЖА, ТАРНАЕРШ, ТАПИЕСЕЧЕ, БАРЛАГ, МЕНДЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Болгари çарĕсем, нимĕçсене хирĕç Югослави çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Югослави çĕрĕнче СКОПЛЕ хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 21 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 10 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пирĕн çарсем венгерсен Ясберень хулине, тăшманăн тĕреклетнĕ паха пункчĕ пулса тăраканскерне, туртса илнĕ. Нимĕçсем ку районра хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене пухнă та хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Вĕсем пирĕн наступлени туса пыракан чаçсене темиçе хутчен те каялла хăваласа яма хăтланнă. Анчах та гитлеровецсен атакисем пĕри те ăнăçман. Ясберень хулинчен 5 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Якохалма ялне йышăннă хыççăн совет чаçĕсем тăшмана аякран кайса çавăрса илме пуçланă. Çавăрса илессинчен хăраса, нимĕçсемпе венгерсем хăйсен флангĕсене хӳтĕлеме тăнă. Шăп çав вăхăтра пирĕн çарсем татăклă атака пуçласа янă, вара, урамсенче хаяррăн çапăçнă хыççăн, Ясберень хулине туртса илнĕ. Кун каçиччен 50 ял тата темиçе чугун çул станцине йышăннă. Пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ тата нимĕçсемпе венгерсен 570 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн разведчиксем тăшманăн пехотнăй тата танковăй дивизийĕсен чаçĕсем вăрмана пухăнса атака тума хатĕрленнине курнă. Пĕр соединенири артиллеристсемпе минометчиксем нимĕç çарĕсем пухăнса тăнă вырăна хăватлăн пеме тытăннă. Пирĕн тупăсемпе минометсем хаяр çил-тăвăл пек персе тăнă. Çав вăхăтрах совет бомбардировщикĕсемпе штурмовикĕсем тăшмана сывлăшран пыра-пыра çапнă. Çакна кĕтмен гитлеровецсем питех те пысăк çухатусем тӳснĕ. Тăшман аптăраса кайнипе усă курса, пирĕн пехотинецсем атака пуçласа янă та лайăх позицисем туртса илнĕ.

Пирĕн летчиксем нимĕçсен Салдус хули районĕнчи аэродромне тапăннă. Нимĕçсен 4 самолетне пĕтерсе тăкнă, 3 самолетне сиенленĕ.

* * *

Пултуск хулинчен кăнтăртарахра Совет Союзĕн Геройĕ Хромых командир пулса тăракан подразделени боецĕсем нимĕçсене сасартăк атакăланă та вĕсен траншейисене туртса илнĕ. Тăшман, çĕнĕ вăйсем илсе пырса, çав траншейăсене каялла туртса илме хăтланнă. Нимĕçсен роти траншейăсем патне сывăхарсах çитнĕ. Çав вăхăтра пирĕн артиллеристсем гитлеровецсене вăйлă пеме тытăннă. Нимĕçсен ротинчен пĕтĕмпе те 20 салтак кăна чĕррĕн тăрса юлнă, вара вĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра нимĕçсен пехоти çапăçса разведка тума хăтланнă. Совет подразделенийĕсем гитлеровецсене хăйсем патне сывăхарма панă та пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн пеме тытăннă. Тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне çити амантса е вĕлерсе пĕтернĕ, вара гитлеровецсен каялла чакма лекнĕ.

Миоков капитан ертсе пынă тăватă летчик-истребитель боевой задание пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра тăшман истребителĕсен ушкăнне тĕл пулнă. Сывлăшра пуçланса кайнă çапăçура пирĕн летчиксем нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсем Совет Латвийĕнче çав тери тискер ĕçсем тунă. 1941 çулхи кĕркунне гитлеровецсем Рига хулинчен 17 километрта ларакан Саласпилс ятлă местечкăра çав тери пысăк концентрациллĕ лагерь тунă. Çав лагере çынсем «хăрушлăхпа вилĕм лагерĕ» тесе ят панă. Фашистсен прçĕрĕсем унта Рига халăхне, советсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене, çавăн пекех тата поляксемпе французсене темиçе пин çын вĕлерсе пĕтернĕ. Çавăн пекех тата мирлĕ совет çыннисене — вырăссене, латышсене, белоруссене, еврейсене — нимĕç ирсĕрĕсем Румбула, Царски тата Бикер вăрманĕсенче массăллăн пере-пере вĕлернĕ. Румбула местечкинче пурăнакан Петер Лейман, Анна Лейман, Антон Коновалов çапла каласа кăтартнă: «1941 çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче Румбула вăрманне нимĕç салтакĕсем йĕри-таврах хупăрласа ишсе сыхласа тăчĕç. Вырăнти çынсене вăрман патне сывăхарма чарса лартрĕç, унта сывăхаракансене асăплантарса вĕлеретпĕр, тесе хăратрĕç. Эпир çав вăрманта хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем чуна çурса кăшкăрнине час-часах илтеттĕмĕр. Çав вăрманта фашистла нимĕç захватчикĕсем Латвие оккупацилесе пурăннă пĕтĕм вăхăт хушшинче çынсене пере-пере пăрахатчĕç. 1944 çулхи август уйăхĕ çитсен кăна гитлеровецсем хăйсен преступленийĕсен йĕрĕсене пытарма пуçларĕç. Ятарласа тунă командăсенчи нимĕç салтакĕсем темĕн чухлĕ халăха пытарнă вилтăприсене уçса, унти вилесене çунтарса яма тытăнчĕç. Юлнă юлашкисене шăтăксене пăрахса, çиелтен çĕрпе витетчĕç. Оккупаци вăхăтĕнче нимĕçсем Германи каторгине Советлă Латви республикинчен темиçе вунă пин çынна хăваласа кайрĕç». Рига хули çыннисем — Освальд Книс, Иван Козулин, Людвиг Плинтс тата ытти нумай çынсем çапла каласа панă: «Хĕрлĕ Çар Латви çĕрне кĕме тытăнсанах, гитлеровецсем вырăнти мирлĕ халăха питĕ йышлăн Германие хăваласа кайма пуçларĕç. Нимĕç салтакĕсем урамсене, площадьсене хупăрлахупăрла илетчĕç те, кăнтăрлах яра-яра илсе, «Болдерайд» тата «Замковая» пристанĕсене хăваласа каятчĕç, вара унта вылььăхсене тиенĕ пек пароходсем çине тиесе, фашистсен чуралăхне турттарса каятчĕç. Хула урамĕсенче çавăн пек ярса тытнă çынсене киле кĕрсе хăйсен тăванĕсенчен сывпуллашса уйрăлма тата хăйсемпе пĕрле кирлĕ япаласене илме ирĕк памастчĕç. Ашшĕ-амăшĕсене хăйсен пĕчĕк ачисенчен уйăрса илсе каятчĕç. Мĕнле те пулин хирĕç каласан, нимĕçсем вырăнтах пере-пере пăрахатчĕç. Эпир çавна хамăр куçпа курнă, нимĕçсем урамсене хупăрласа илнĕ вăхăтра нумайăшчен подвалсенче пытанса пурăннă. Рига хулинче пурăннă юлашки кунсенче гитлеровецсем хуларн мирлĕ çынсене ушкăнĕ-ушкăнĕпе тинĕсе илсе тухса, шыва путара-путара вĕлерчĕç. Октябрĕн 4-мĕшĕнче нимĕçсем Рига çыннисене — темиçе çĕр вырăспа латыша — «Одер» пароход çине ирĕксĕр лартрĕç те, Германие илсе каятпăр, тесе пĕлтерчĕç. Хуларан темиçе километр кайсан, нимĕçсем çав çынсене тинĕсе ывăтма тытăнчĕç. Шыва пăрахнă çынсем хăшпĕри тинĕс хĕррине ишсе çитме тăрăшрĕç, анчах та гитлеровецсем вĕсене пере-пере пăрахрĕç. Автомобильсен мастерскойĕнче ĕçлекен рабочи Антон Ивановский çапах та шывран ишсе тухса хăтăлчĕ. Вара вăл хулана каялла çитсе, фашистла нимĕç ирсĕрĕсен çав усал ĕçĕ çинчен каласа кăтартрĕ».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 14-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем ноябрĕн 13-мĕшĕнче Мец хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра çаплах малалла куçса пынă. Пехота чаçĕсем Эрни хули патне çитнĕ, вĕсем халĕ Ансервиль хулинчен пĕр миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăраççĕ. Союзниксен аллинче çак хуласем пур: Мозель шывĕ çинчи Корни, Поммерье, Верне тата Корни хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Льеон.

Люневиль хулинчен хĕвелтухăçнерехри секторта, тăшман вăйлă хирĕç тăнине пăхмасăрах, икĕ миля таран малалла кайнă. Лейнтре хулине ирĕке кăларнă. Брюйер хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри секторта чылай пысăк ăнăçу тунă.

Голландире патрульсем кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă.

Çанталăк начар тăнă пирки авиаци каллех вăйлă кĕрешеймен.

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 15-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Веертран хĕвелтухăçнерехри секторта союзниксен çарĕсем нимĕçсен позицийĕсене атакăланă. Тăшман вăйлах хирĕç тăман. Пĕр ял туртса илнĕ. Моордер тата Вессен каналĕсем çинче тăшмана тапăнма укрепленисем тунă.

Мец хули секторĕнче союзниксен çарĕсем тăшман контратакисене сирсе янă, хула çинелле çурçĕр енчен те, кăнтăр енчен те вăйлăрах та вăйлăрах хĕссе пыраççĕ. Мозель шывĕ çинчи Кенингсмахер тата Теонвиль районĕнчи укрепленисене тытса тăракан союзниксен çарĕсем пĕрпĕринпе пĕрлешнĕ. Союзниксен чаçĕсем Фрешинг тата Кунтдиг патне çитнĕ, союзниксен патрулĕсем Лемстрофф хули таврашĕнчи ялсене кĕрсе кайнă. Союзниксен ытти соединенийĕсем Орни хулине туртса илнĕ, унтан вара Кау-де-Лопиталь ятлă пункта кĕрсе кайнă.

Çанталăк начар тăнă пирки авиаци вăйлă кĕрешме пултарайман.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 14-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире 8-мĕш арми чаçĕсем Форли хули районĕнче чылай малалла кайнă. Форли хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Англи çарĕсем темиçе тĕлте Монтоне шывĕ урлă каçса кайнă, вĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăрать пулин те, çав шывран çурçĕртерехри тусем умнелле куçса пыраççĕ. Сулахай флангра 8-мĕш арми чаçĕсем Баньоло хулине йышăннă тата, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, Монте Казола ятлă паха тӳпеме тăшмантан тасатнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италипе Югославири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 15-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире 8-мĕш арми чаçĕсем Форли хули районĕнче çаплах ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Çав хуларан çурçĕр-хĕвеланăçнелле Англи чаçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, Сан-Томе ялĕнчен иртсе кайнă. Форли хулинчен хĕвеланăçнерехре акăлчансен ытти чаçĕсем хăйсем Монтоне шывĕ çинче тăшмана тапăнма тунă укреплени патĕнчен малалла куçнă. 5-мĕш арми секторĕнче Инди дивизийĕ, тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе, Монте-Сан-Бартоло ятлă паха çӳллĕ вырăна йышăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Македонире Югослави чаçĕсем Скопле хулин тулашри оборонине татнă та хулана вăркăнса кĕрсе кайнă. халĕ унта урамсенче çапăçаççĕ. Халăх çарĕн чаçĕсем Скопле хулин сылтăм енчи пайне тата Скопле хулин çурçĕр пайĕнчи чугун çул станцине тытса илнĕ.

Метохире, Белый Дрин секторĕнче, Югослави чаçĕсем, хаяррăн çапăçнă хыççăн, Джаковица хулине ирĕке кăларнă. Тăшманăн çав хулари гарнизонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Черногорире Югослави чаçĕсем Цетинье хулине йышăннă. Çапла вара, Подгорица районĕнче пухăнса тăнă нимĕç чаçĕсен каялла чакмалли çулне пӳлсе лартнă. Нимĕçсен Цетинье хулинчи гарнизонне вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

Далмацире, Книн секторĕнче, нимĕçсен хупăрласа илнĕ чаçĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Семен Яковлевич Эдельман

Ватă большевик, ВКП(б) членĕнче 1905 çултанпа тăракан Семен Яковлевич Эдельман вилсе кайрĕ.

Семен Яковлевич çамрăкранпах Октябрьти Социализмлă Аслă Революци кунĕсенче çĕнтерне ĕçшĕн кĕрешнĕ. Патша влаçĕ ăна тĕрмене лартнă, ăна хĕсĕрленĕ.

Октябрьти революци хыççăн Семен Яковлевич хăйĕн пĕтĕм вăйне халăх ĕçне панă.

Чăваш республикинче вăл 1918 çултанпа пурăннă. Партколлеги членĕ пулса ĕçлесе, вăл яланах парти речĕсен тасалăхĕшĕн тăрăшнă, парти линине пăсниксене хирĕç хытă кĕрешнĕ. Парти речĕсене тасатнă чухне Эдельман юлташ уйрăмах активлăн ĕçленĕ, ватă большевикăн опытне çамрăккисене панă.

Семен Яковлевича унпа тĕл пулакансем хăвăртах юратса пăрахнă, ăна парти ыйтăвĕсене татса панă чухне тӳрĕ кăмăллă та тĕрĕс пулнăшăн юратнă.

Юлашки çулсенче Эдельман юлташ, чирлĕ пулнă пирки, обществăллă ĕçсене хутшăнма пултараймарĕ.

Ватă большевика Эдельман юлташа унпа тĕл пулнă тата пĕрле ĕçленĕ юлташсем яланах лайăх кăмăлпа аса илĕç.

АНДРЕЕВА, АХАЗОВ, ИЗМАЙЛОВ, ТЕРЕНТЬЕВ, КАЛИНКИНА, ЗОЛОТНИКОВ, ГРАЧЕВА, ТОЛСТОВ, КАЛИНОВСКИЙ, ПРОХОРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Халь уçăлакан электротехника техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: техникум секретарĕ, вĕренӳ пайĕн секретарĕ, комендант, бухгалтер, агент-кладовщик, истопниксемпе уборщицăсем, гардеробщиксем, дворник.

Ĕçукçи — килĕшнĕ тăрăх. Комендантă, дворнике тата истопнике хваттер параççĕ. Техникумра ĕçлекенсем столовăйра апатланаççĕ тата вĕсене завод магазинĕ çумне çирĕплетеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. К. Маркса, 82.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—07, заместителĕн секретарĕн — 4—20, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00795. Типографи № 1, Управления полиграфиро издательства при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 56×12 ч. Тираж 10.000 экз.